Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

6 (8170) № ✻ Юн кун, 2014 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 29-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Раççейре

## Пенсисем ӳсеççĕ

Февралĕн 1-мĕшĕнчен ĕç пенсийĕсем 6,5 процент пысăкланаççĕ.

«2014 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен Раççейри 37,8 миллион пенсионерăн ĕç пенсийĕсем 2013 çулта таварсем хакланнине шута илсе 6,5 процент ӳсеççĕ. Çапла вара çĕр-шывра ватлăхпа паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 11,4 пин тенкĕпе танлашать», – пĕлтерет Раççей Пенси фончĕн пресс-службӣ.

Пресс-служба пĕлтернĕ тăрăх кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен те ĕç пенсийĕсене хăпартма палăртаççĕ. Ку хутĕнче – 5 процент чухлĕ.

**«Новости РИА».**

Олимпиада

## Чăваш Енрен – Сочие

Чăваш Республикинчен Елена Муратова фристайлистка Сочире иртекен Олимпиадăна хутшăнма тивĕçнĕ. Раççейăн пĕрлештернĕ Олимп командин йышне кĕртнисем хушшинче унăн ячĕ те пур.

Пĕрлештернĕ командăра пĕтĕмпе 223 çын. Вĕсем спортăн 15 тĕсĕпе ăмăртусене хутшăнаççĕ. Муратовăн «могул» дисциплинăра вăй виçмелле пулать. Вăйлăрах хисене палăртмалли пĕрремĕш старт февралĕн 6-мĕшĕнче пулмалла, Сочири Олимпиадăна официаллă майпа уçиччен шăп пĕр талăк маларах.

Кунсăр пуçне историре пĕрремĕш хут хĕллехи Олимпиадăсене йĕркелекенсем хушшинче Чăваш Енрен 33 çулхи Денис Салдимиров тренер та пулĕ. Малтанласа вăл Олимп вăййисене волонтерсен йышĕнче хутшăнма шутланă. Анчах та Салдимиров унччен профессионал биатлонист пулнине пĕлсен ăна Сочире ăмăртусем пуçăниччен йĕлтĕр тата биатлон трассисене пăхса тухакан прокатчик спортсмен пулса ĕçлеме сĕннĕ. Паллă ĕнтĕ, Денис хаваспах килĕшнĕ.

Çырăнтару – 2014

## Хаклă çыннăм!

**Эсĕ район хаçатне кăçалхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнма манман-и? Аса илтеретпĕр: ăна февраль уйăхĕнчен илсе тăма та çырăнма май пур. Малашне те пĕрле пуласчĕ!**

**Райхаçат редакцийĕ.**

Ленинграда блокадăран хăтарнăранпа – 70 çул

## Вĕсем вилĕме çĕнтернĕ



*Тунти кун пирĕн çĕр-шыв Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Ленинграда 900 куна яхăн тăсăлнă фашист блокадинчен хăтарнине (1944 çулхи январĕн 27-мĕшĕ) асăнчĕ.*

*Çултан-çул çак вăрçа хутшăннисем, вăл шутра Ленинграда хӳтĕленисем те, сахаллансах пыраççĕ. Паянхи кун пирĕн районта Ленинграда хӳтĕлеме хутшăннă икĕ ветеран – Муркашри Николай Александрович Александров тата Çаранçырми ялĕнче пурăнакан Иван Харитонович Харитонов, çавăн пекех блокадăллă Ленинградра пурăннă Пелагея Васильевна Анатольевăпа (Москакасси) Александр Зиновьевич Бурдейный (Мăн Сĕнтĕр) пурăнаççĕ.*

*Паллă кун вĕсем пурте ЧР Пуçлăхĕн Тав çырăвне, район администрацийĕн Тав çырăвне тата Санкт-Петербург хулин «Ленинграда фашист блокадинчен хăтарнăранпа 70 çул çитнине халалласа» ярăмри астăвăм паллисене илме тивĕç пулчĕç.*

*Блокадăллă Ленинградра пурăннă П. Анатольевăпа А. Бурдейная район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ В. Аникина саламларĕç.*

Культура çулталăкĕ

## Хушма укçа – 129,5 млн. тенкĕ




Раççей Федераци Канашĕн наука, вĕренӳ, культура тата информаци политики енĕпе ĕçлекен комитечĕн членĕ Галина Николаева палăртнă тăрăх Культура çулталăкĕпе çыхăннă мероприятисем (Мускавра вăл çут çанталăкăн Пĕтĕм Раççейри «Первозданная Россия» фестивалĕпе уçăлчĕ) Чăваш Республикинче Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул тата Чăваш автономине туса хунăранпа 100 çул çитнине уявлама хатĕрленнĕ тапхăрпа пĕр килеççĕ.

Республикăра пурăнакансем Культура çулталăкĕнчен культура сфери çине ытларах тимлĕх уйăрасса кĕтнĕ. Вăл шутра пурлăхпа техника базине çирĕплетесси çине те, культура ĕçченĕсен шалăвне ӳстересси çине те. Кĕтни кăлăхах мар. Кăçал республикăра культура валли уйăракан укçа-тенкĕ калăпăшне 129,5 млн. тенкĕ чухлĕ ӳстерме палăртнă.

«Чăваш Республикинче культурăна аталантарасси çинчен» подпрограммăпа килĕшӳллĕн культурăпа кану учрежденийĕсене юсама, библиотекăсемпе музейсен ĕçне-хĕлне тивĕçтерме, культура несĕллĕхне сыхласа хăварма тата аталантарма сахал мар укçа-тенкĕ уйăрĕç. Чăваш Енре республика тулашĕнче те паллă фестивальсемпе конкурссем сахал мар иртĕç.

«Кăçалхи çулталăк Раççей халăхĕсен культурине сыхласа хăварассин тата малалла аталантарассин, ăс-хакăл чĕрĕлсе çĕнелсе пырассин çулталăкĕ пулса тăрасса шанатăп», – палăртнă сенатор.

Вĕренӳ

## Электрон хутшăнăвĕ аталанать

Ял тăрăхĕсенче ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвне йĕркелесе пыракан специалистсен черетлĕ вĕренӳ семинарĕ иртнĕ. Район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Лина Игнатьева пухăннисене нормативпа право документсем хатĕрленĕ чухнехи тĕп требованисем, официаллă документсем хатĕрленĕ чухне ытларах тĕл пулакан йăнăшсем çинче чарăнса тăнă.

Райадминистрацин информаципе тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхĕ Валерий Лаврентьев СМЭВ ĕçне тивĕçтерессипе татса памалли йĕркелӳ ĕçĕсен ыйтăвне хускатнă, капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарас енĕпе ĕçлекен пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Ольга Тимофеева çынсене услугăсемпе тивĕçтернĕ чухне СМЭВ-па усă курнă чухнехи ĕçсен кашни тапхăрне уçăмлатнă, ыйтусене хуравланă.

Çавăн пекех Валерий Григорьевич ял тăрăхĕсен карттисемпе ĕçлеме специалистсен ĕç станцийĕсем çине MapInfo программăна вырнаçтарасси тата майлаштарасси мĕнле пулса пымаллине кăтартнă, конкретлă тĕслĕхсем çинче чарăннă.

Хыççăн вара семинара хутшăнакансем районăн 70 çулхи юбилейне хатĕрленсе кĕтсе илессипе çыхăннă ыйтусем пирки калаçнă.

Çак вăхăта ал тăрăхĕсен администрацийĕсенчен çуррине СМЭВ-па ĕçлеме кирлĕ программăна вырнаçтарса йĕркелесе çитернĕ. Ăна тестлас ĕçсем сарăлнă. Февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пур ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче те СМЭВ палăрăмлă çĕнĕ шайра ĕçлеме тытăнмалла.

**Хамăр инф.**

Çĕнĕлĕх

## Виçĕ цифрăллисем пулĕç

Январĕн 27-мĕшĕнчен тытăнса Раççейре васкавлă чĕнсе илмелли службăсемпе çыхăнмалли номерсене улăштарма тытăнчĕç. Унччен йăлана кĕнĕ икĕ цифрăллисем вырăнне виçĕ цифрăллă номерсем пулаççĕ. Унччехи номерсем умне «1» цифра лартмалла пулĕ. Çĕнĕ система çине куçасси операторсем техника тĕлĕшпе хатĕрленсе çитнине кура тапхăр-тапхăр пулса пырĕ. Çапла вара пушар хуралне е МЧС-а 101, полицие 102, васкавлă медицина пулăшăвĕн службине 103, газпа тивĕçтерессин авари службине 104 номерсемпе шăнкăравламалла пулĕ. Пĕрлехи номер унччехиех юлать – 112.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Уйăхлăх мероприятисемпе пуян

Январĕн 23-мĕшĕнче районта оборонăллă-массăллă тата спорт ĕçĕсен уйăхлăхĕ пуçланчĕ. Вăл февралĕн 23-мĕшĕччен пырать. Çак тапхăрта районта тĕрлĕрен мероприятисемпе конкурссем, ăмăртусем сахал мар ирттерме палăртса хунă. Вĕсем пуçланчĕç те ĕнтĕ.
Январĕн 25-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче хĕрарăмсен командисем хушшинче волейболла выляссипе район чемпионачĕ иртнĕ.
Январь – февраль уйăхĕсенче Пĕтĕм Раççейри «Эпĕ – Раççей гражданинĕ» акцин районти тапхăрĕ, паттăрлăх, тематика урокĕсем, ОБЖ енĕпе викторинăсем, февралĕн 1-мĕшĕнче 40 çултан иртнĕ арçынсен командисем хушшинче волейболла выляссипе район чемпионачĕ, февралĕн 2-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕсен «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2014» ăмăртăвĕ, призыв çулне çитмен яшсем хушшинче пăшалтан тĕл перессипе, февралĕн 8-мĕшĕнче физкультура учительне Г.Н. Осипова асăнса волейболла выляссипе ăмăртусем иртĕç. Тĕрлĕ мероприятисем татах чылай.
Уйăхлăх пĕтмĕшĕнче февралĕн 23-мĕшĕнче В.П. Федорова асăнса пăшалтан тĕл перессипе ăмăрту пулĕ. Февралĕн 21 – 22-мĕшĕсенче вара совет çарĕсене Афганистанран илсе тухнă куна халалласа митингсемпе концертсем йĕркелеме пăхнă.

## Пурнăçа хакламалла

Иртнĕ çул 278 хĕрарăмпа 252 арçын çĕре кĕнĕ. Вăл шутран пенси çулне çитмесĕрех арçынсем 112-ĕн тата хĕрарăмсем 26-ăн пурнăçран уйрăлнă. Чи пысăк инкек – ачасем вилни. Тăватă ача пĕр çулталăка çитмесĕрех, икĕ ача виçĕ çула çитиччен, 4 ача 16 çул тултариччен çĕре кĕнĕ.
Вилнин сăлтавĕсем çаксем. Чирлесе вилнĕ хĕрарăмсем 247-ĕн, арçынсем 175-ĕн. 12 хĕрарăмпа 36 арçын хăйсен вилĕмĕпе вилмен. 16 хĕрарăмпа 34 арçын мĕн сăлтавпа вилнине тупса палăртман.

## Вунă кунлăх итогĕсем

Январĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса 29-мĕшĕччен район территорийĕнче «Автобус» ятпа вунă кунлăх иртрĕ. Çакна автотранспортпа пассажирсем илсе çӳренĕ чухне пулакан инкексене асăрхаттарас, водительсен транспорт дисциплинине çирĕплетес тĕллевпе йĕркеленĕ. Тишкерӳ çавна кăтартса парать. Аварисем ытларах чухне автотранспорт водителĕсем çул çинче хăвăртлăх режимне пăхăнманнипе, транспорт хатĕрĕсем хушшинче кирлĕ дистанцие тытса пыманнипе пулаççĕ.
Аварисене кĕçнерни, эрне тата тунти кунсенче ытларах регистрациленĕ.

## Инкекре пулăшакана Турă пулăшать

Йывăр лару-тăрăва лекнĕ ачасене пулăшасси хисеплĕ те чыслă ĕç тесе шутлать Муркашри нотариус Павел Шлаев. Кун пеккисене ыр кăмăллăх пулăшăвĕ парасси Павел Ивановичăн йăлине кĕнĕ темелле. Вăл ăнăççăр, нумай ачаллă, йывăр лару-тăрăва лекнĕ çемьесенче тăтăшах пулать, ачасен пурнăç условийĕсемпе паллашать.
Ку хутĕнче П. Шлаев Çĕньял Очăкассинчи Алексеевсен çемйине пулăшнă. Çемье сивĕ кунсенче ăшăсăр тăрса юлнă. Çул çитмен Дмитрие амăшĕ пĕчченех пăхса ӳстерет. «Нотариат ачасене пулăшать» акцие хутшăнса Павел Шлаев Çĕнĕ çул умĕн çурта хутса ăшăтма газ парса тăма тытăнма Алексеевсен çемйине кирлĕ сумма укçа уйăрнă, Дмитрие вара çи-пуç, атă-пушмак, шкул хатĕрĕсем, кучченеçсем туянса панă.
Алексеевсен çемйи кирлĕ вăхăтри пулăшушăн П. Шлаева пысăк тав сăмахĕ калать.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**хатĕрленĕ.**

# Ял хуҫалӑхӗнче вӑй хуракансене тинех асӑрханӑ

**Пенси реформи**

### СТРАХОВАНИ ПЕНСИЙӖ

Иртнӗ ҫулхи декабрӗн 29-мӗшӗнче Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ Владимир Путин пенси реформин саккунне алӑ пусса ҫирӗплетнӗ. 2015 ҫултан пуҫласа страховани пенсийӗ тата пухӑнакан пенси вӑя кӗрет, ҫавӑн пекех ытти ҫӗнӗлӗх те пур кунта.

Виҫӗ условире страховани пенсийӗ уйӑраҫҫӗ: хӗрарӑмсем 55 ҫула, арҫынсем 60 ҫула ҫитсен; страховани стажӗ 15 ҫул пулсан; ӗҫленин пӗтӗм тапхӑрӗнчи индивидуаллӑ пенси коэффициенчӗ 30-тан сахал мар пулсан.

Ҫапла вара пенсие тухас ҫула сыхласа хӑварнӑ, стаж шайӗ тата официаллӑ ӗҫ укҫи калӑпӑшӗ мӗн чухлӗ пулнин пӗлтерӗшӗ ӳсет.

Страховани пенсийӗн условийӗсене тулли шайра вӑя кӗртесси 2025 ҫултан пуҫланать. 2015 ҫул – куҫӑм тапхӑрӗ. Ҫак ҫултан пенсие тухма кирлӗ чи пӗчӗк стажултӑ ҫул пулать, ун хыҫҫӑнхи ҫулсенче пӗрер ҫул ӳссе пырать. Индивидуаллӑ пенси коэффициенчӗн чи пӗчӗк шайӗ 2015 ҫултан пуҫласа 6,6 пулать, ӑна та хӑпартма палӑртнӑ.

Енчен те пенсие тухас тапхӑр ҫитнӗ тӗле стажпа коэффициент ҫителӗксӗр пулсан страховани пенсине каярах юлса параҫҫӗ. Е социаллӑ пенсипе (хӗрарӑмсене 60 ҫултан, арҫынсене 65 ҫултан) тивӗҫтереҫҫӗ. Унсӑр пуҫне пенси ҫумне пенсионерӑн регионти пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫи шайне ҫитерме социаллӑ хушма тӳлев кӗртме палӑртнӑ. Индивидуаллӑ пенси коэффициенчӗн шайӗ кашни ҫул ӗҫленинчен килет. Ӗҫ укҫи мӗн чухлӗ пысӑкрах, ҫулталӑкри пенси коэффициенчӗн пӗлтерӗшӗ те ӳсӗмлӗрех. Ҫулталӑкри пенси коэффициентне шутланӑ чухне ӗҫ укҫин официаллӑ пайне кӑна пӑхаҫҫӗ. Пенси фончӗ ӗҫлекен кашни ҫыннӑн коэффициентне шута илет. Ҫак ӗҫ хӑш шайра пынине «Личный кабинет застрахованного лица» электрон сервисран пӗлме пулать.

### СТРАХОВАНИ СТАЖӖ

Страховани стажне ӗҫ ҫулӗсенче Пенси фондне страховани взносӗ куҫарнӑ тапхӑр кӗрет. Ӗҫ кодексӗпе килӗшӳллӗн 2014 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ӗҫ рынокӗнче уҫҫӑнлӑх ытларах пултӑр тесе ӗҫ параканпа ӗҫлекен хушшинчи правӑпа граждан килӗшӗвне хӑйсем тӗллӗн тума чарнӑ. Ӑна йӗркелесси патшалӑхӑн ӗҫ инспекторӗн предписанийӗпе е суд шайӗнче пулмалла. Ку тӗлӗшпе саккуна пӑснӑ тӗслӗхсемшӗн штраф тӳлеттерме йышӑннӑ, категорие кура 10 пинрен пуҫласа 100 пин тенкӗ таранах.

Ҫӗнӗ саккунра страховани стажне страхламан тапхӑра (нестраховой период) кӗртессине сыхласа хӑварнӑ. Социаллӑ пӗлтерӗшлӗ тапхӑрсене – призывпа ҫарта пулни, 1, 5 ҫулччен ача пӑхни, инвалид ачана пӑхни, 1 ушкӑнри инвалида е 80 ҫултан иртнӗ ҫынна пӑхни – ҫулталӑкри ятарлӑ пенси коэффициентне ҫирӗплетеҫҫӗ, енчен ҫак вӑхӑтсенче ӗҫлемен пулсан.

1,5 ҫулччен ача пӑхнӑ тапхӑршӑн коэффициент мӗнле пуласси вӗсен шучӗпе тӳрремӗнех ҫыхӑннӑ.

– 1,8 – пӗр ҫулхи отпускшӑн – пӗрремӗш ачашӑн,

– 3,6 – пӗр ҫулхи отпускшӑн – иккӗмӗш ачашӑн,

– 5,4 – пӗр ҫулхи отпускшӑн – виҫҫӗмӗшпе тӑваттӑмӗш ачасемшӗн.

Йӗкӗреш е ытларах ача ҫуралсан коэффициентсене хушаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, йӗкӗрешшӗн амӑшӗн пӗр харӑсах 5,4 коэффициент (1,8 тата 3,6) пулать. Ҫапла вара патшалӑх амӑшне тата ытларах тимлӗх уйӑрма пуҫлать.

### СТРАХОВАНИ ПЕНСИЙӖН ФОРМУЛИ

Страховани пенсин калӑпӑшне шутласа пӗлес тесен пӗтӗм ҫулхи пенси коэффициентне пӗр ҫулхи пенси коэффициенчӗн хакӗ ҫине хутламалла. Пенси коэффициенчӗн хакне ҫулсеренех Пенси фончӗн бюджечӗ ҫинчен калакан федераци саккунӗ палӑртать. 2015 ҫулта вӑл 64 тенкӗ те 10 пус пулӗ.

Саккуна унччен пулман ҫак ҫӗнӗлӗхе те кӗртнӗ. Пенси ҫулӗ ҫитнӗ, анчах та ӗҫ пӑрахман ҫын пенси илме ыйтса каярах та заявлени ҫырма пултарать. Ҫак категори валли хушма хавхалантару мелӗ палӑртнӑ. Пӗр ҫул каярах юлса пенси илме шутланишӗн страховани пенсийӗ преми коэффициенчӗпе пулать.

Тӗслӗхрен, Верук аппан пенсие тухма вӑхӑчӗ ҫитнӗ-ха, анчах та вӑл ку ӗҫе 5 ҫул каярах хӑварма шухӑшланӑ. Ҫапла вара унӑн фиксированнӑй тӳлевӗ 36 процент чухлӗ, страховани пенсийӗ 45 процент чухлӗ ӳсет. Енчен те Верук аппа 10 ҫулах тӑхтас тет пулсан фиксированнӑй тӳлев 2,11 хут, страховани пайӗ 2,32 хут хӑпарать.

Фиксированнӑй тӳлев малтанхи шутлавра та пулнӑ. 2015 ҫулта унӑн пӗр уйӑхри калӑпӑшӗ 3935 тенкӗпе танлашать. Хӑш-пӗр категорин татах та пысӑкрах.

Фиксированнӑй тӳлев преми коэффициенчӗ чухлӗ хӑпарать, енчен те ҫын малалла та ӗҫлет тата пенси илме ыйтман пулсан. Унсӑр пуҫне фиксированнӑй тӳлев хӑпарасси ял хуҫалӑхӗнче тимлекенсене те пырса тивет. Ӗҫлеменнисен, ял хуҫалӑхӗнчи стаж 30 ҫулран кая мар тата малалла та ялтах пурӑнаканнисен 25 процент чухлӗ ҫак тӳлев ытларах пулать. Раҫҫей Федерацийӗн Правительстви икӗ ҫул хушшинче ятарлӑ перечень хатӗрлет, унпа килӗшӳллӗн ял хуҫалӑхӗнче тимлекенсен 2016 ҫултан пуҫласа пенси укҫи калӑпӑшне ӳстереҫҫӗ.

Пенсионерсен пенси калӑпӑшӗ асӑннӑ ҫӗнӗлӗхсене пула хӑпармасть, вӗсене коэффициента куҫараҫҫӗ.

Ӗҫлекен пенсионерсен хӑйсен ирӗкӗ пур, вӗсем пенсие ҫулсеренех ҫӗнӗрен шутлаттарма пултараҫҫӗ. Ун пек чухне индивидуаллӑ пенсин ҫӳллӗ шайри коэффиценчӗн пӗлтерӗшӗ 3 коэффициентпа танлашать.

### СТРАХОВАНИ ПЕНСИНЕ СРОКЧЕН ПАЛӐРТАССИ

Пенсие маларах тухас йӗрке сыхланса юлнӑ. 1 тата 2 № списоксене улшӑнусем кӗртмен.

Сывлӑхшӑн сиенлӗ тата хӑрушлӑх кӑларма пултаракан ӗҫ вырӑнӗллӗ организацисем 2014 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ӗҫ условине ятарлӑ хак пама тивӗҫлӗ. Унӑн пӗтӗмлетӗвӗсене шута илсе страховани взносӗн дифференциллӗ тарифӗпе усӑ курма палӑртнӑ. Ҫакӑн шайне пӗчӗклетме те, пысӑклатма та пултараҫҫӗ.

Палӑртнӑ вӑхӑтчен пенсие тухма ирӗклӗ ҫынсем те пенсие тухас тапхӑра каярах хӑварма пултараҫҫӗ.

### ПУХӐНАКАН ПЕНСИ

2015 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа пенсин пухӑнса пыракан пайӗ хӑй тӗллӗн уйрӑм пенси тӗсӗ – пухӑнакан пенси – пулать. Ӑна гражданин суйланӑ Раҫҫей Пенси фончӗ, ҫавӑн пекех патшалӑхӑн шутланман пенси фончӗ палӑртать. Ҫакна шутласа парас-тивӗҫтерес йӗрке улшӑнмасть. 2016 ҫултан пуҫласа тӳлевӗн ҫитес вӑхӑтри тапхӑрне (ожидаемый период выплаты) федераци саккунӗ палӑртать, ку чухне ҫак пенсие илекенсен пурнӑҫ тӑршшӗне шута илет.

1967 ҫулта ҫуралнисен тата унран кӗҫӗнреххисен пухӑнакан пенси тӗлӗшпе ҫак икӗ ҫулта ҫирӗп суйлав тумалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Официально**

### ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО АУКЦИОНА

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее – организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее – аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договора аренды земельного участка, расположенного на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 14.01.2014 № 05 «О проведении открытого аукциона на право заключения договора аренды земельного участка, расположенного на территории Моргаушского района Чувашской Республики».

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66

Характеристика объектов аренды:

Лот №1 – земельный участок с кадастровым номером 21:17:160302:859, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Парковая, д. 10, для строительства многоквартирного жилого дома, площадью 1610 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка: не имеются.

Со сведениями о технических условиях подключения к сетям инженерно-технического обеспечения можно ознакомиться по вышеуказанному адресу.

Стоимость присоединения к сетям инженерно-технического обеспечения будет определена при оформлении договоров на оказание услуг на присоединение.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 100 110 (сто тысяч сто десять) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (20 022 руб. 00 коп.).

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (5 005 руб. 50 коп.).

Срок аренды – 5 лет.

Информация о проведении аукциона:

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района, ИНН 2112389501 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810175025013018 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 29 января 2014 года по 28 февраля 2014 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312.

Дата, время и порядок осмотра земельного участка на местности: по предварительной записи в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района после публикации данного извещения.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров аренды земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании комиссии 03 марта 2014 года в 16.00 часов по адресу организатора аукциона. Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды земельного участка. Договор аренды земельного участка заключается в срок не позднее 5 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится 05 марта 2014 года по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, 3 этаж, каб. № 312. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1 – 10.30.

**Ял тӑрӑхӗсенче**

# Вырӑнсенче пурнӑҫ вырӑнта тӑмасть

***Ҫак кунсенче ял тӑрӑхӗсенче тӗрлӗ мероприятисем сахал мар иртеҫҫӗ. Ку ҫапла пулмалла та. Пурнӑҫ пӗр вырӑнта тӑмасть вӗт-ха. Мероприятисенчен ытларахӑшне вара Сочире иртекен хӗллехи Олимпиадӑна, Культура ҫулталӑкне, района йӗркеленӗренне 70 ҫул ҫитсе килнине халалланӑ. Район юбилейне вара чаплӑ ларутӑрура Шупашкарта Чӑваш академи драма театрӗнче февралӗн 14-мӗшӗнче уявлӑпӑр.***

**Мӑн Сӗнтӗр.** Районта художество пултарулӑх коллективӗсен «Чечеклен, юратнӑ Муркаш ен» конкурс фестивальне ҫулсеренех йӗркелеҫҫӗ. Кӑҫал ӑна Раҫҫейре ирттерекен Культура ҫулталӑкне тата районӑн 70 ҫулхи юбилейне халалланӑ. Уяв мероприятийӗ январӗн 21-мӗшӗнче Мӑн Сӗнтӗрти информаципе культура центрӗнче пысӑк концерт программипе пуҫланнӑ. Кунта ҫав каҫ Мӑн Сӗнтӗрти, Вомпӑкассинчи, Шупуҫӗнчи коллективсем хӑйсен пултарулӑхӗпе савӑнтарнӑ.

Фестивале вокалпа инструментсен «Картина» халӑх ансамблӗ уҫнӑ. Коллектива 1984 ҫулта йӗркеленӗ. Ӑна ЧР культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ И. Зайцев ертсе пырать. Вӑл ҫамрӑк хӗрсенчен тӑракан «Смайл» эстрада ушкӑнне те йӗркеленӗ. Вомпӑкасси ялӗнчи клуб ҫумӗнчи пултарулӑх ӗҫне халӗ кӑна тытӑннӑ «Илемпи», Шупуҫ клубӗ ҫумӗнчи «Ҫӑлкуҫ» коллективсем те ӑста пулнӑ. «Янаш» юрӑпа ташӑ халӑх ансамблӗ те уяв каҫне илем кӳнӗ.

**Оринин.** Оринин тӑрӑхӗнче пурӑнакансем те ташӑ-юрӑна ӑста. «Чечеклен, юратнӑ Муркаш ен» конкурс фестивалӗпе ҫыхӑннӑ уяв каҫӗ кунта та иртнӗ.

Сивӗ ҫанталӑка пӑхмасӑрах Орининти информаципе культура центрне халӑх йышлӑ пухӑннӑ. Ҫав каҫ кунта «халӑх» ятне тивӗҫнӗ виҫӗ коллектив («Шуракӑш» юрӑпа ташӑ халӑх ансамблӗ, Орининти халӑх театрӗ, ветерансен «Орин ен» халӑх хорӗ), ҫавӑн пекех Мулкачкассинчи клуб-библиотека ҫумӗнче йӗркеленнӗ «Пучах» тата Атапай клубӗ ҫумӗнче ҫӗнӗрен чӑмӑртаннӑ «Сурпан» ушкӑнсем хӑйсен пултарулӑхӗпе савӑнтарнӑ.

* * *

«Оринино» ял хуҫалӑх производство кооперативӗн кубокне ҫӗнсе илессишӗн ӑмӑртусем кӑҫалхипе 18-мӗш хут иртнӗ. Вӗсене 10 команда хутшӑнма кӑмӑл тунӑ. Ӑмӑртӑва хутшӑнакансем шашкӑлла, шахматла, волейболла выляссипе вӑй виҫнӗ. Командӑсен пӗтӗмӗшле кӑтартӑвӗсем тӑрӑх 1-мӗш вырӑна тата кубока «Оринино» хуҫалӑх команди ҫӗнсе илнӗ. 2-мӗшпе 3-мӗш вырӑнсене Мӑн Сӗнтӗрпе Нискассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулсен командисем тивӗҫнӗ.

**Катькас.** Ӑста маҫтӑра, Чӑваш АССР культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченне, йывӑҫран касса тӗрлӗ эрешсем хатӗрлекен П. Мазуркина чылайӑшӗ лайӑх пӗлет. Ӑстаҫӑ 65 ҫул тултарнине халалласа Калайкассинчи Культура ҫуртӗнче унӑн пултарулӑх каҫӗ иртнӗ. Культура ӗҫченӗсем, шкул коллективӗсем, район администрацийӗн культура тата архив ӗҫӗсен пайӗн пуҫлӑхӗ Е. Чернова, Катькас ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Г. Лебедев, ЧР наукӑпа искусство академийӗн президенчӗ Е. Ерагин, «Тӑванлӑх», «Ҫӑлкуҫ», «Ентеш» пултарулӑх коллективӗсем, юлташӗсем, ӗҫтешӗсем, ял ҫыннисем хастар ӗҫчене малашне те ҫирӗп сывлӑх, пултарулӑх ӗҫӗнче ӑнӑҫусем суннӑ.

**Шетмӗпуҫ**. Сочире иртекен хӗллехи Олимпиадӑна халалласа Шетмӗпуҫ библиотекинче кӗнекесен «Читать о спорте книги надо, мы ждем тебя,Олимпиада!» выставкине йӗркеленӗ. Кунта вырнаҫтарнӑ кӗнекесенчен спортӑн тӗрлӗ енӗсемпе, спортсменсене хатӗрлессин майӗсемпе, тренировкӑсен методикисемпе, упражненисем тӑвассин техникипе, команда вӑййисен тактикипе, ҫавӑн пекех Чӑваш Енре физкультурӑпа спорт мӗнле аталанса пынипе те паллашма пулать.

**Юнкӑ.** Февраль уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче шкултан унченхи ҫулсенче вӗренсе тухнисемпе йӑлана кӗнӗ тӗл пулу йӗркелеҫҫӗ. Шкул ҫулӗсем нихҫан та асран тухмаҫҫӗ. Ҫын шӑпах ӗнтӗ шкул ҫулӗсенче хӑйне, хӑйӗн ӗҫне, хӑйӗн вӑхӑтне хаклама вӗренет, ҫывӑх юлташсем, хӑшӗпӗри юрату та тупать. Шкултан вӗренсе тухнисем ҫак куна чӑтӑмсӑррӑн кӗтеҫҫӗ. Вӗсем шкулта вӗреннӗ чухнехи юлташӗсемпе, юратнӑ учительсемпе тӗл пулӗҫ, хальхи вӗренекенсене хӑйсен ӳсӗмӗсем, ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен каласа парӗҫ.

**Ҫатракасси.** Вырӑссен аслӑ писателӗ А. Гайдар ҫуралнӑранпа 110 ҫул ҫитнине халалласа Кашмаш ял библиотекинче «Гайдар кӗнекисен геройӗсем» литература каҫӗ ирттернӗ. Уроксем хыҫҫӑн 2-мӗшпе 4-мӗш классенче вӗренекенсем хӑйсен учителӗпе Е. Тихоновӑпа ял библиотекине васканӑ. Кунта вӗсене интереслӗ программа кӗтнӗ. О. Семенова библиотекарь писателӗн пурнӑҫ ҫулӗпе пултарулӑхӗ ҫинчен каласа панӑ, писатель биографийӗ пирки презентаци ирттернӗ. Кунтах А. Гайдарӑн ӗҫӗсен выставкипе те паллашма май пулнӑ. Вӗренекенсем викторинӑна хаваспах хутшӑннӑ, мультфильм та пӑхнӑ.

**Турай.** 2014 ҫула Культура ҫулталӑкӗ тесе йышӑннӑ. Ҫавна май Турайри Культура ҫуртӗнче Хусанта пурӑнакан С. Шигапов фольклористпа тӗл пулу йӗркеленӗ. Унта Турай шкулӗнче вӗренекенсем, ял ҫыннисем хутшӑннӑ. Тӗл пулӑва хутшӑннисем С. Шигапов Атӑл тӑрӑхӗнче пурӑнакан тӗрлӗ халӑх юррисене халӑх инструменчӗсемпе шӑрантарнине хаваспах итленӗ.

**Йӳҫкасси.** Ял тӑрӑхӗн территорийӗнче пурӑнакан ҫамрӑксенчен ытларахӑшӗ пушӑ вӑхӑта Матьӑкри Культура ҫурчӗн спортзалӗнче ирттерме кӑмӑл тӑвать. Шкул ачисем те унта хаваспах ҫӳреҫҫӗ. Волейболла, баскетболла, мини-футболла, регби вылямa кунта пур условисем те туса панӑ. Культура ҫурчӗн ертӳҫи А. Семенова спортзала ҫӳрекенсене яланах хавас кӗтсе илет, ытларах ҫамрӑка физкультурӑпа спорта явӑҫтарма тӑрӑшать.

**В. ШАПОШНИКОВ хатӗрленӗ.**

# Укçа-тенкĕ кивçен парсан

**Район судĕнче**

Раççей Федерацийĕн Гражданла кодексĕн 808 статйинче палăртнă тăрăх займ илнĕ-панă чух, ун сумми ĕç укçин уйăхри чи пĕчĕк виçинчен вунă хут пысăкрах пулсан, çакăн пирки килĕшӳ çырса йĕркелемелле, займ илесси-парасси организацисемпе çыхăннă пулсан вара кирек мĕнле сумма чухне те килĕшӳ ĕве çырса тумалла.

Раççей Федерацийĕн Гражданла кодексĕн 432 статйинче палăртнă тăрăх икĕ ен килĕшӳре кирлĕ пек формăпа палăртнă пур тĕп условие те йышăнаççĕ пулсан килĕшӳ тунине пĕлтерет. Çак тĕп условисем шутне килĕшӳ предмечĕ, саккунпа е право акчĕпе тĕп е кирлĕ тесе палăртнă условисем, çавăн пекех пĕр ен палăртнипе килĕшӳре татса памалли условисем те кĕреççĕ.

Килĕшӳ çырнă чух палăртса хăварнă е саккунпа пăхса хунă лару-тăрусене е тухса тăнă килĕшменлĕхсене суд урлă татса памалла.

Займ, кредит килĕшӳвĕсем тăрăх укçа-тенкĕ тавăрса пама ыйтса çырнă искесем тăрăх 2013 çулта Муркаш район судĕнче гражданла 72 ĕç пулнă. (Çакăн пек искесемпе çынсем ответчик ăçта пурăннине кура унта вырнаçнă суда тухаççĕ). Суд 65 гражданла ĕç пăхса тухнă, вĕсенчен 60-шĕнче заявление тивĕçтернĕ, 5-шĕнче заявление тивĕçтермен, 2 ĕçпе заявленисене пăхса тухмасăр хăварнă, 4 ĕçпе производствăна чарнă, ытти 6 ĕçе çак çулталăкра пăхса тухма тивĕç.

Чылай ĕçпе ответчик вырăнĕнче пĕр çынсемех. Вĕсемшĕн çынран укçа кивçен ыйтса ăна тавăрса памасăр пурăнасси йĕркене кĕнĕ ĕнтĕ.

Çапла М. гражданин Хорнуйĕнче пурăнакан Петровскийрен кивçен панă укçана шыраса илме ыйтса суда искпа тухрĕ. Петровский пурăнаса унта пурăнмасть, анчах та ăна унта регистрациленĕ. Иска икĕ ен çырнă распискăра Петровский М. гражданинран 160000 тенкĕ укçа кивçен илнипе, ăна 2010 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче тавăрса пама пулнипе ăнлантарнă. 2011 тата 2012 çулсенче Петровский кивçен илнĕ укçан пĕр пайне – 15000 тенке кăна тавăрса панă, юлашки пайне халĕ те тавăрса памасть. Вăл М. гражданинран пытанса пурăнать, унăн çырăвĕсемпе телефон шăнкăравĕсем çине хуравламасть, чăннипе пурăнакан вырăнне те улăштарнă. Çапла вара М. гражданин искра Петровскийрен 145000 тенкĕ шыраса илме тата укçапа усă курнăшăн 30604 тенкĕ те 83 пус процента, малалла – суд йышăнăвĕ тухакан кунччен, шыраса илме ыйтнă.

Петровский суд ларăвне килмерĕ. Суд ĕçри пур документа тишкерсе йышăнăва кусăмсăр майпа турĕ. Çапла вара Петровскийрен М. гражданин майлă 145000 тенкĕ кивçен илнĕ укçана, 34757 тенкĕ те 70 пус – процент укçине, 4704 тенкĕ те 11 пус суд расхучĕсемшĕн тӳлемелли патшалăх пошлинине, представитель тытса расхутланнăшăн – 2000 тенкĕ шыраса илме йышăну турĕ. Пурĕ 186461 тенкĕ те 81 пус.

Петровский йышăнупа килĕшрĕ, ăна çăхавламарĕ. Йышăну саккунлă вăя кĕнĕ ĕнтĕ.

Петровскийпе çыхăннă çак тĕслĕх унпа пулса иртнĕ пĕртен-пĕр тĕслĕх мар, 2007 çултанпа çак ответчикпа çыхăннă вунă ĕç пухăнчĕ, вĕсенчен виççĕшĕ производствăри тишкерӳ тапхăрĕнче кăна-ха.

Тепĕр чух суда сăлтавсăрах искпа тухнă тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ. Кун пек йăнăш утăм тумалла марри пирки вулакансене çитес номерте конкретлă тĕслĕхпе паллаштарса асăрхаттарăпăр.

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**ЧР Муркаш район сучĕн судйи.**

# Типĕ пушмак, ăшă алсиш тата лайăх апатлану

**Сивĕ çанталăкра**

Çанталăк сивĕ тăнă чух «лайăх, пур усал вирус-микробсем вилеççĕ» тенине илтме тӳр килет. Çапли çапла пулĕ те, хамăрăн вара çак вăхăтра чирлес мар тесе тăрăшмалла. Ал-урасене, хăлхасемпе пите шăнтса ярасран та, кĕлетке пĕтĕмĕшле хытă шăнасран та асăрханмалла. Специалистсен сĕнĕвĕсене шута илсе акă мĕн калама пулать.

Урама тăвăр та нӳрĕ атă-пушмакпа е тумтирпе тухма юрамасть, уйрăмах çиллĕ çанталăкра. Çак япаласене яланах çанталăка кура тăхăнмалла. Урама тухмашкăн пушмак типĕ пултăр, нӳрри шăнтать. Сăран пушмака урама тухас умĕн пĕр-пĕр çупа сăтăрмалла – вăл шыв ан кĕрттĕр. Алсиш ăшă пулмалла. Ăна икĕ хут тăхăннă чух çиеле сăраннине тăхăнсан вăл сивве шала ямасть. Сивĕ çанталăкра калпаксăр, тутăрсăр çӳремелле мар. Хăлхасене уйрăмах хытă сыхламалла.

Сивĕре пирус туртни нимĕн чухлĕ те пулăшмасть, юн çаврăнăшĕшĕн сиенлĕ пулать çеç. Хусканусем нумайрах тума тăрăшмалла. Çуран утнă чух вăхăтран вăхăта лавккасене ăшăнма кĕрсе тухма та юрать. Урамра 10 градус сивĕ кăна пулсан та нумай вăхăт уçă сывлăшра пулни ӳте шăнтса яма пултарать.

Сивĕ чухне эрех ĕçмелле мар, мĕншĕн тесен эрех ĕçни организм ăшшине чакарать, çавăнпа та сире сивĕ мар пек туйăнать кăна.

Сивĕре лайăх апатланмалла, витаминсем йышăнмалла. Çакă кунне пĕрре вĕри апат çимелле тенине пĕлтермест – кунĕпех апатлану пуян пулмалла.

Урама тухиччен тутана вазелинран хатĕрленĕ помадăпа сĕрмелле. Пӳрнесене, сăмсана, пит çăмартисемпе янаха, хăлхасене те пĕр-пĕр çупа (тăварлине мар) сĕрме юрать.

Ӳте шăнтнине вара çак паллăсен тăрăх пĕлме пулать: ӳт шуралса каять, унăн сисĕмлĕхĕ пĕтет. Ăшăпа çак вырăнсен шыçса хĕрелеççĕ, ыратаççĕ. Кĕлетке пĕтĕмпех шăнни, ывăннăн туйни, каярах сывăрас килни эсир хăвăра шăнтса янине пĕлтерет. Алăсемпе урасем нимĕн те сисмеççĕ, сывласси тата чĕре тапасси вăйсăрланать. Çак вăхăтра васкавлă пулăшу памасан çын вилет.

Ӳте шăнтнине туйсанах ăшă вырăна кĕмелле. Шăнтнă вырăнсене урамра та, пĕр-пĕр пӳлĕме кĕрсен те сăтăрма юрамасть. Çав тĕле вĕри тата сивĕ япаласем те хумалла мар. Шăнтнă алăсене тӳрех вĕри батарейăсем çумне тытмалла маррине те пĕлмелле. Ку татах та сиен кӳрет кăна.

Шăнтнă вырăнсене ятарлă кремсемпе, сăмахран, сырлан çăвĕ пуррисемпе, сĕрмелле. Аптекăсенче вĕсене сутаççĕ. Ăшă пылак чей ĕçмелле, пĕр стакан кăна мар, темиçе ĕçни те лайăх.

Урамра шăнса кӳтнĕ çын вырттине курсан васкавлă медицина пулăшăвне чĕнмелле. Машина çитиччен вара асăннă сĕнӳсене шута илсе май пур таран пулăшу памалла. Ытла хытă шăнса кӳтнĕ çынна ăшă пӳлĕме тăрук кĕртмелле мар, урамрах ăна пĕр-пĕр япалапа витĕнтерсе ăшăнма пулăшмалла. Кайран пӳлĕме кĕртмелле.

Ӳте шăнтнă пулсан тӳрех мунчана кайма та юрамасть!

Хĕлехи вăхăтра сывлăш температури 25 градусран ытла чухне 1 – 4-мĕш классенче вĕренекенсен уроксем иртмеççĕ. Ку, паллах, ачасен сывлăх сыхлавĕпе çыхăннă. «Çакăн пек йышăнăва районти вĕренӳ пайĕпе килĕшсе кашни вĕренӳ учрежденийĕ хăйĕн уставĕнче çирĕплетсе хушу кăларать», – çапла пĕлтерчĕç район администрацийĕн вĕренӳ пайĕнчен. Сывлăш температури 30 градус тата ытларах пулсан 1 – 9-мĕш классенче вĕренекенсен шкула каймалла мар, 35 градусран сивĕрех пулсан – 10 – 11-мĕшсен те.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**хатĕрленĕ.**

**Объявления**

**Постановление главы Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 27.01.2014г. № 2**

О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»

В соответствии со статьей 28 закона Российской Федерации от 06.10.2003 г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 5 февраля 2014 года в 14 часов 00 минут в МБУК «Кашмашский информационно-культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, деревня Кашмаши, улица Советская, дом № 82.

2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Глава Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Г.В. ТРОФИМОВ.**

**Проект муниципального правового акта**

**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п. 10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года № 137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний администрация Моргаушского района Чувашской Республики постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:230102:665 из категории «земли населенных пунктов, разрешенное использование: для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Ятманкино, ул. Мира, общей площадью 142 кв.м. на «для строительства и содержания зданий и сооружений».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 05.02.2014 года до 9-00 часов.

**Прогноз погоды**

| | среда 29 января | | | | четверг 30 января | | | | пятница 31 января | | | | суббота 1 февраля | | | | воскресенье 2 февраля | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -23 | -22 | -22 | -25 | -30 | -24 | -19 | -19 | -23 | -20 | -17 | -20 | -25 | -23 | -19 | -24 | -24 | -17 | -14 |
| Давление мм | 764 | 766 | 768 | 768 | 769 | 769 | 769 | 768 | 768 | 768 | 768 | 768 | 768 | 768 | 769 | 768 | 768 | 766 | 766 |
| Влажность % | 83 | 64 | 71 | 83 | 95 | 77 | 84 | 80 | 81 | 83 | 84 | 82 | 77 | 73 | 82 | 82 | 85 | 72 | 78 |
| Ветер м/сек | 5 | 4 | 2 | 2 | 2 | 3 | 5 | 6 | 4 | 3 | 4 | 4 | 2 | 2 | 2 | 3 | 2 | 3 | 5 |
| | С-В | С-В | С-В | С-З | З | З | З | З | З | З | С-З | С-З | С-З | З | З | Ю-З | Ю | Ю | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 08:52 | 17:19 | | | 08:50 | 17:22 | | | 08:48 | 17:24 | | | 08:46 | 17:26 | | 08:44 | 17:28 | |
| Луна восход / заход | | 07:13 | 15:50 | | | 07:54 | 17:13 | | | 08:27 | 18:41 | | | 08:55 | 20:08 | | 09:19 | 21:32 | |


**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**«ВИКТОРИЯ – ОКНА» ИП Шишкин** 3-10.
**Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата.**
2-10. **Скидка на все – 40%. Тел.: 8-937-955-33-00.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 5-10.

**Спутниковое цифровое телевидение**
**ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб.** 3-10.
**ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб.**
**Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 6-23.

**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
* Представительство в судах по всем видам споров;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Подготовка исков, составление договоров;
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в.т.ч. земельными участками: оформление в собственность, в аренду, регистрация;
* Взыскание по КАСКО и ОСАГО, дела по ДТП;
*Услуги по оценке имущества;
* Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119.
Тел.: 62-4-43. сот. 8-903-358-84-64.
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.**
**Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36.** 2-10.

**Продается комната в с. Моргауши площадью 18 кв. м. Тел.: 8-987-678-55-51, 8-906-133-67-72.**

***

**Новогодние скидки на мед цветочный, урожай 2013 года, цена – 250 руб. Тел.: 8-908-309-66-75.** 9-10.

***

**Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96.** 6-10.

***

**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83.** 6-10.

***

**В связи с открытием АЗС требуются операторы и заправщики. Официальное трудоустройство. Достойная заработная плата. Тел.: 8(83541)69-8-11.** 2-3.

***

**Продаю дрова колотые, возможна доставка.**
**Тел.: 8-937-384-56-18.** 1-2.

***

**Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13.** 1-2.

***

**Продаются березовые дрова.**
**Тел.: 8-903-065-58-68.** 1-3.

***

**Продается квартира в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-903-358-16-56.**

***

**СХПК «Герой» по пятницам в с. Моргауши реализует дробленное зерно (фас., 30 кг) по цене 294 руб., кондиционные семена клевера (фас., 25 кг) по цене 2500 руб., семена люцерны (фас., 25 кг) по цене 3500 руб. Тел.: 8(83541)67-5-79, 67-5-48, 8-906-385-64-49, 8-987-578-41-04.** 1-3.

***

**МУП ЖКХ «Моргаушское» сообщает о размещении полного объема информации за 4 квартал 2013 г. и на 2014 г., подлежащей раскрытию во исполнение Постановления Правительства РФ № 24 от 21.04.2004 г. на официальном сайте в сети интернет МУП ЖКХ «Моргаушское»: http//morgaushi-gkh.ucoz.ru/. Указанная информация также предоставляется на основании письменных запросов.**

***

**Вутă сутатăп. Тел.: 8-937-379-01-25.**

***

**Тюкланă утă сутатпăр. Шомик ялĕ.**
**Тел.: 8-903-066-34-58, 8-906-130-92-83.**


«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Михаил Михайлович ЗАМЯТИН**
пенсионер, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 28.01.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4931.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.